23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
7
ЮНКУН
234 (6169) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ирттерсе тултарар

Партипе правительство выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртсе пырса, республикăри колхозсемпе совхозсем выльăхсен йышне, вĕсен продуктивноçне чылаях ӳстерчĕç. Партипе совет организацийĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе кулленех ĕçлени çĕрте ку енĕпе чылай çитĕнӳсем тунă. Анчах чылай районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ «СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Самрăк выльăхсене сыхласа хăварассипе тата колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси çинчен» ВКП(б) Кувакино тата Йĕпреç райкомĕсен секретарĕсен Бочковпа Артемьев юлташсен доклачĕсене сӳтсе-яврĕ. Асăннă районсенче ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) çĕршыв тата Хĕрлĕ Çар выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене нумай ытларах ыйтнине кирлĕ пек ăнланса илмен.

Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн государство планĕ Йĕпреç районĕнче лашасем енĕпе — 84,5 процент, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе — 93,4 процент, сыснасем енĕпе — 95,5 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе — 73,7 процент, кроликсем енĕпе — 22,5 процент тата кайăк-кĕшĕксем енĕпе — 55,7 процент пурнăçа кĕнĕ. Хăшпĕр колхозсенче выльăхсен йышĕ 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнипе танлаштарсан чылай чакнă. Çапла, Калинин ячĕпе тăракан, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче выльăхсен йышĕ нумай сахалланнă.

Кувакино районĕнчи колхозсенче сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне лашасем енĕпе план 77 процент, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе—91 процент, сыснасем енĕпе — 94 процент пурнăçланнă.

Ама выльăхсем пирки уйрăмах ĕç çăтма çук начар тăрать. Йĕпреç районĕнче ĕнесем усрас енĕпе плана 76,6 процент, сысна амисем енĕпе — 81,4 процент, сурăхсем енĕпе — 70,2 процент, Кувакино районĕнче ĕнесем енĕпе — 81 процент, сысна амисем енĕпе —68 процент пурнăçа кĕртнĕ. Çак районсенче ама выльăхсене нумайрах усрани кăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме май панине манса кайнă.

Йĕпреç тата Кувакино районĕсенчи колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕлле лайăх усрама витесем тăвасси çине сахал çавăрăнса пăхнă. Çавăн пирки çамрăк выльăхсем вилни чылай пулнă. Хăшпĕр колхозсенче выльăхсене унталла-кунталла сапаласа пĕтернĕ. Çапла, Йĕпреç районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозăн фермине план тăрăх сурăхсем 300 пуç пулмалла, анчах унта 89 пуç кăна. Фермăра сурăхсем сахал пулсан та, колхоз 45 сурăха какай тума пуснă. Кувакино районĕнчи «Красный передовик» колхозра 200 сысна пулмалла, унта 123 сысна кăна. Çав вăхăтрах какай тума 19 сысна пуснă тата 77 сысна çури сутнă. Ку районсенчи ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсем колхозсен çавăн пек киревсĕр ĕçĕсене сирсе яма нимĕнле мерăсем те йышăнман. Çавăнпа пĕрлех выльăхсене хĕл каçарма витесене юсас тата çĕнĕ витесем тăвас ĕçсене начар пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавăн пирки нумай колхозсенче выльăхсене хупса усрама витесем çитмеççĕ. Силос хатĕрлес ĕç те начар тăрать. Кувакино районĕнче силос хывас плана сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 54,6 процент, Йĕпреç районĕнче — 92,2 процент пурнăçланă.

Пирĕн республикăра нумай колхозсенче ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановленине начар пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансене ĕçшĕн кун тăрăх тӳлеме пăрахман-ха, выльăхсене кашнине скотниксем çумне çирĕплетмен, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене шута илессине япăх туса пыраççĕ, çамрăк выльăхсем мĕнле ӳснине шута илсе пымаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе малта пыракансен опытне сарас ĕçе начар организациленĕ. Выльăхсене пăхакансем хушшинче политикăллă ĕçе тата воспитани парас ĕçе туса пымаççĕ, колхозсен фермисенче ĕçлекенсем хушшинче социализмла ăмăртса ĕçлессине сарман.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе япăх ертсе пыраççĕ, колхозсен фермисенчи выльăхсен йышне планпа кăтартнă хисепе çитерес тĕлĕшпе вăхăтра мерăсем йышăнман, колхозниксем хушшинче Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн социализмлă ăмăртăва тата политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек организациленмен.

ВКП(б) райкомĕсен райсовет исполкомĕсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерес пулать.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ партин Кувакино тата Йĕпреç райкомĕсене СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Самрăк выльăхсене сыхласа хăварассипе тата колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме хушрĕ. Октябрь уйăхĕнче фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх йышне планпа кăтартнă шута çитерес пулать, выльăхсем сутăн илес плана тултармалла, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе государство планне кашни колхозрах пурнăçа кĕртмелле.

Обком пленумĕ ВКП(б) Кувакино тата Йĕпреç райкомĕсен секретарĕсене Бочковпа Артемьев юлташсене, райсовет исполкомĕсен председателĕсене Прытченковпа Алексеев юлташсене вĕсем колхозсен фермисенчи выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе начар ĕçленине кăтартса пачĕ. Выльăхсене унталла-кунталла сапаланисем тата выльăхсем вилни малашне те пулсан, çак юлташсене çирĕп ответ тыттармалла пуласси çинчен асăрхаттарчĕ.

ВКП(б) райком секретарĕсен, райсовет исполкомĕсен председателĕсен, МТС-семпе совхозсен политотдел начальникĕсен выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕç çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Пленум выльăх витисене çĕнĕрен тăвас, юсас, ăшăтас ĕçсене октябрь уйăхĕнче йăлтах туса çитерме хушрĕ. Выльăхсене хĕлле усрама хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе, хатĕр витесене йышăнас ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлекен колхозсен вĕсемпе ăмăртакан колхоз хăйĕн фермисене хĕле кĕме хатĕрлесе çитернипе çитерменнине тĕрĕслес пулать. Çамрăк выльăхсене валли ăшă витесем, чирленĕ выльăхсене уйрăмăн хупса усрамалли витесем тумалла.

Выльăх апачĕсен балансĕсене тата кашни уйăхра мĕн чухлĕ апат памалли плансене октябрĕн 15-мĕшчен туса, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче пăхса тухмалла. Силос хатĕрлес плансене пурнăçа кĕртмелле. Колхозсенче выльăхсем валли апат пĕçерме, хытă апатсене çемçетме кирлĕ хатĕрсемпе кухньăсем хатĕрлемелле. Выльăхсене апат çемĕçтерсе, йӳçĕтсе, тураса тата ытти майсемпе лайăхлатса памалла. Кĕрхи пăсăк çанталăксенче çитерме фермăсем патне икшер уйăхлăх апат турттарса хумалла. Колхозсенче выльăх апачĕсене тирпейлĕ тыткаланине куллен тĕрĕслесе тăрас пулать, выльăх апачĕсене тăккалама памалла мар. Выльăхсен продуктивноçне хăпартнăшăн вĕсене пăхакансене ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона çирĕппĕн пурнăçласа пымалла. Пур колхозсенче те выльăхсене зоотехника кăтартнă нормăсем тăрăх тăрантармалла.

Лашасене лайăх пăхса усрасси çине уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхас пулать. Конюхсем пулса ĕçлеме шанчăклă çынсене уйăрмалла. Хăш лашана кам пăхассине, унпа кам ĕçлессине палăртмалла, ку лашашăн вара çав çынсем çине ответлăх хумалла. Çавăнпа пĕрлех кастарнă вăкăрсем ӳстерсе, вĕсене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентмелле.

Уйрăм районсемпе колхозсен руководителĕсем кайăк-кĕшĕк, хурт-хăмăр тата кролик ĕрчетессине хакламаççĕ. Çак питех те пысăк ĕçе хак хуманни пулмалла мар. Кашни колхозăнах кайăк-кĕшĕк, кролик тата хурт-хăмăр ĕрчетес плансене тултармалла.

Выльăхсене пăхас ĕçри кадрсем пĕрмаях улшăнса тăни пулмалла мар. Вĕсем хушшинче политикăллă ĕçе анлăн туса пымалла, вĕсене зоотехникăна вĕрентмелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе колхозсене пурне те, выльăх пăхакансене пурне те социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарассишĕн, выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл усрассишĕн тата вĕсен продуктивноçне хăпартассишĕн социализмлă ăмăртса ĕçлес пулать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен опытне районри хаçатсемпе стена хаçачĕсенче анлăн çутатмалла, вĕсен ĕçĕсем çинче партин, советсен активĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе ĕçлекенсем валли лекцисем тата докладсем ирттерес ĕçе организацилемелле. Районри ялхуçалăх выставкисенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пынине анлăн кăтартмалла, малти вырăнта тăракан фермăсенче мĕнле майпа пысăк ӳсĕмсем тума пултарнипе паллаштармалла.

ХИРТИ ĔÇСЕНЕ ВĔÇЛЕРĔÇ

ВĂРНАР. (Телефонпа). Сендимиркинăри «Гигант» колхоз паянхи куна авăн çапса пĕтерчĕ, çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртрĕ. Кĕрхи çĕртме планне тултарчĕ. Колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕнче фронтри пек ĕçлеççĕ. Халь колхоз районри ялхуçалăх выставкине тăма хатĕрленет. Ĕçрен пушаннă колхозниксем вăрман касса турттарас ĕçе тытăнчĕç.

Е. ВОЛКОВ.

МТС-сен дирекцийĕсемпе политотделĕсем тăратнă тăрăх, машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн тата трактор ĕçĕсен çулталăкри планне срокчен тултарнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Шăмăршă МТС-ĕ тăрăх:

136 Тракторист **Никандр Васильевич Камкин,** вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 178 процент тултарнă, 10 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

137. Тракторист **Насибулла Шайдиллович Губайдуллин,** вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 133 процент тултарнă.

138. Комбайнер **Алексей Васильевич Аверьянов,** вăл 325 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарса кĕртсе сезонри плана ирттерсе тултарнă, 57 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

139. Комбайнер **Василий Иванович Чашкин,** вăл «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе 230 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарса кĕртнĕ, планра 110 гектар кăтартса панă пулнă, 20 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

140. Комбайнер Василий **Тимофеевич Фадеев,** вăл «Коммунар» маркăллă икĕ комбайнпа ĕçлесе 624 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарса кĕртнĕ, планра 220 гектар кăтартса панă пулнă, 20 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

141. Трактор бригадин бригадир помощникĕ **Семен Семенович Долгов,** вăл трактор ĕçĕсен планне хăй бригади тăрăх 103 процент тултарма пулăшнă, МТС-ра пĕрремĕш вырăн йышăннă.

142. Трактористка **Александра Николаевна Кошкина,** вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 130 процент тултарнă, 50 килограмм сĕрмелли çусем перекетлесе хăварнă.

Етĕрне МТС-ĕ тăрăх:

143. Комбайнер **Виктор Иванович Токсубаев,** вăл 217 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарса кĕртсе сезонри плана ирттерсе пурнăçланă, планра 80 гектар кăтартса панă пулнă.

144. Комбайнер **Каземир Фиондевич Москалан,** вăл планра кăтартса панă 80 гектар вырăнне 192 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарса кĕртнĕ.

145. Тракторист **Матвей Федорович Дербенев,** вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 140 процент тултарнă.

146. Тракторист **Борис Матвеевич Дербенев,** вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 120 процент тултарнă.

Авăн çапса пĕтернĕ

ШĂХАСАН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем социализмлă ăмăртăва хутшăнса авăн çапас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Халĕ район авăн çапас плана 71 процент тултарнă. Калинин, Ворошилов, Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем—пĕтĕмпе 8 колхоз авăн çапас ĕçсене вĕçлерĕç.

Ухманти «Победа» колхозра авăн çапас ĕçе лайăх организациленĕ. Колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр итем çинче авăн çапаççĕ. Электричество вăйĕпе ĕçлекен «ЦО—28» молотилка (машинисчĕ П. Елимов) сменăра 16 тонна вырăнне 20 тонна, «МК—1100» молотилка (машинисчĕ И. Долгов) сменăра 21—22 тонна тырă çапаççĕ.

Авăн çапас ĕçе «Ударник», «Заря», «Красный пахарь» колхозсенче те начар мар организациленĕ. Кунта та колхозниксем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ.

Районри колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурте çĕрулми кăларса пĕтерчĕç.

И. БЕЛОРУСОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ĕçлес хастарлăх ӳссе пырать

Аслă Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Вăрмар районĕнчи колхозсем уборка ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. «Атнаш» колхоз государствăна тырă тата пахча-çимĕçсем памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă, кĕрхи çĕртме туса, çĕрулми кăларса пĕтернĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз пур выльăхсем енĕпе те 120 процент тултарнă. Кăçал колхоз çĕнĕрен хур ферми тăвать.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă. Çĕрулмине кăларса пухса кĕнĕ. Авăна каçхине те çапас ĕçе организованно туса пыраççĕ.

В. АНДРИЯНОВ.

Ăмăртăва хутшăннă май

КАЛИНИНО. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн районри чылай колхозсем 1942 çулти ялхуçалăх çулне хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Эпшикри, Чулкаçри «Смычка» колхозсем çĕрулмине кăларса государствăна парса татрĕç. Кунсăр пуçне ку колхозсенче авăн çапассине те 100 процентчĕпех пурнăçланă.

Шуркассинчи «Социализм» колхоз государствăна обязательнăй йĕркепе памалли, Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли тата натуроплата шучĕпе памалли тырра октябрĕн 1-мĕш тĕлне 100 процентчĕпех парса татнă, пахча-çимĕç, çĕрулми, аш-какай, сĕт-çу, çăм памалли обязательствăсене те пĕтĕмĕшпех пурнăçланă.

Колхоз октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 50 ĕне, 60 сурăх вырнаçмалăх вите юсать тата 100 сысна валли çĕнĕ вите тăвать.

Б. ШОРНИКОВ.

Выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем хатĕрлес ĕçе кая хăварма юрамасть

ЕТĔРНЕ. Районри малта пыракан колхозсем 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. Калинин ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕнепăрусем енĕпе 104 процент, сурăхсем енĕпе 121 процент, сыснасем енĕпе 150 процент тултарнă.

Выльăхсене хĕлле çутă та ăшă витесенче пăхса усрассишĕн нумай колхозсем халĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз çак иртнĕ уйăхра 50 пуç ĕне вырăнаçтармалăх тата 20 пăру вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса лартрĕ. Кĕçĕн Чутайри Тельман ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх витисене пĕтĕмĕшпех хĕллене хатĕрлесе çитерчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кунта çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерес ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Кăçал пăрусене пурне те лайăх пăхса ӳстернĕ, выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçĕ те чылай ӳснĕ.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе ăна лайăх пăхса усрас ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Янкиреевăри «Красный маяк» колхозăн председателĕ Родионов юлташ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмасть, витесене халĕ те юсама тытăнман, унта силос хывас ĕç те çителĕксĕр пулса пырать. Выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем хатĕрлес ĕçе кая хăварма юрамасть, вăл—халех тумалли ĕç.

Н. ЛЮБИМОВ.

Выставкăна хатĕрленеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, октябрĕн 6-мĕшĕ (**Телефонпа**). Районри колхозсем ялхуçалăх выставкине тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕç. Агротехникăллă мероприятисене тĕрĕс пурнăçласа пырса кăçал нумай колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç. «Красная Армия» колхоз кăçал кашни гектартан 138 пăт пăрçа, 109 пăт сурхи тулă, 860 пăт çĕрулми туса илчĕ. Уйрăм участоксенчен 1.320-шер пăт çĕрулми тухнă. Колхоз çак кăтартусемпе выставкăра пулма тивĕç илнĕ.

Çавнашкалах «Кустарь» колхоз та пĕр гектартан 162 пăт урпа, «Наркомюст» колхоз 168 пăт пăрçа, кашни чăх пуçне 105-шер çăмарта илчĕç. Выставкăна «Кувшин», «Волга», «Шордан» тата ытти колхозсем те паха экспонатсем тăратаççĕ. Çак колхозсем пурте кăçал гектартан 21—29 центнер пăрça пуç тарса кĕртнĕ.

С. ПЕТРОВ.

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ хушнипе Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ награда илнисене орденсемпе медальсем пачĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи «Первая борозда» ялхуçалăх артелĕн колхозници М. Н. Хозикова юлташ Ленин орденĕ илчĕ. Аслă наградăна илсен, Хозикова юлташ хĕрӳллĕ сăмах тухса каларĕ. Вăл тата лайăхрах, хăйне шеллемесĕр, стахановла ĕçлеме пулчĕ, ылханлă Германи фашизмне аркатса тăкмашкăн фронта пулăшма тупа турĕ.

Чкаловски районри «Кзыл Тан» колхозăн членĕ М. Ш. Шарафутдинова юлташ Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕ илчĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн вăрман промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ Н. Н. Бобров юлташ, ВКП(б) Чкаловски райкомĕн секретарĕ Т. Ф. Валеев юлташ, ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ А. В. Сомов юлташ «Знак почета» орденĕсем илчĕç.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ Д. А. Андреев, партин ЦК ВКП(б) çумĕнчи Контроль Комиссин Уполномоченнăйĕн контролерĕ А. Г. Иванов, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн суту-илӳпе тата обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекен секретарĕ М. А. Кузьмин, ЧАССР Коммунальнăй Хуçалăх Халăх Комиссарĕ И. В. Новиков, Кувакино райсоветчĕн исполкомĕн председателĕ Н. М. Прытченков, ВКП(б) Пăрачкав райкомĕн секретарĕ А. С. Романов тата Çĕмĕрле районĕнчи «Волга» колхозри колхозница Т. Ф. Федотова «За трудовую доблесть» медальсем илчĕç.

Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри колхозницăна М. Н. Айдаровăна, Комсомольски районри çĕрĕç отделĕн землеустроительне В. А. Алексеева, ВКП(б) Улатăр райкомĕн секретарьне Н. И. Горбунова, ВКП(б) Обкомĕн кадрсен отделĕн заведующийĕн заместительне Г. Д. Захарова, НКВД районри уйрăмĕн сотрудникне Н. Л. Лукина, Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь» колхозăн членне Н. И. Орловăна, Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне Д. К. Патшина, Октябрьски райсовет исполкомĕн председательне И. П. Петрова, НКВД районри уйрăмĕн начальникне А. А. Пинкина, Етĕрнери спирт завочĕн десятникне Ф. Я. Соколова, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующине Д. Ф. Талдыкина, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн инструкторне М. Ф. Фадеева, Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхозăн колхозницине Е. Ф. Чечневăна, Комсомольски районри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председательне Н. А. Шингалова, Вăрнар районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн членне П. Е. Юлмасова тата Элĕк районĕнчи Яргунькинăри колхозăн колхозницине Е. Н. Яндубановăна «За трудовое отличие» медальсем пачĕç.

Кунсăр пуçне тата оборона промышленноçĕпе транспорт валли тĕрлĕ ăсталăха пĕлекен квалификациллĕ рабочисем хатĕрлес тĕлĕшпе правительствăн заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланисене Андреева юлташ медальсем пачĕ. Ĕç резервĕсен ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи управленийĕн начальникĕ Г. И. Иванов «За трудовую доблесть» медаль, пĕрремĕш номерлĕ чугунçул училищин директорĕ А. Н. Вельчинский тата иккĕмĕш номерлĕ ФЗО шкулĕн директорĕ В. С. Суриков «За трудовое отличие» медальсем илчĕç.

Çĕршывăн оборона ĕçĕ валли укçа тенкĕ пухас тĕлĕшпе правительствăн заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă К. С. Лунин (Куславкка районĕнчи перекет кассин заведующийĕ) «За трудовую доблесть» медаль тата Х. В. Валиуллин (Чкаловски районри финанс отделĕн заведующийĕ) — «За трудовое отличие» медаль илчĕç.

Орденсемпе медальсем илсен, наградăланă юлташсем вĕсен ĕçне пысăк хак панăшăн партипе правительствăна хĕрӳллĕн тав турĕç, тăван çĕршывшăн тата лайăхрах, хăйсене шеллемесĕр ĕçлеме, ирсĕр нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкмашкăн паттăр Хĕрлĕ Çара тата лайăхрах пулăшма пулчĕç.

Наградăсем илнисен ячĕпе Н. Н. Бобров юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн çĕршыв çине ултавлăн тапăннă гитлерла вăрă-хурахсем çăмăллăнах пире çĕнтерме шутланă, — терĕ Бобров юлташ.—Вĕсем пирĕн çĕршыври ирĕклĕхе юратакан халăхăн хирĕç тăрас çирĕп шухăш-кăмăлне хуçма шутланă. Вĕсем кунта пысăк йăнăш турĕç. Фашистла çĕлен-калтасем ултавлăн тапăнни пирĕн совет халăхне çавтери тарăхтарса çитерчĕ, пирĕн халăх нимĕç оккупанчĕсене вĕсем тунă тискер ĕçсемшĕн, вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕсенче хӳтĕлĕхсĕр юлнă хĕрарăмсене, стариксене, ачасене асаплантарнăшăн тавăрасшăн çунса тăрать.

Бобров юлташ халĕ, пирĕн çĕршыв умĕнче хăрушлăх ӳснĕ вăхăтра, кашни совет гражданинĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлемелли çинчен каларĕ. Тăшмана çĕнтерме мĕн кирлĕ, пирĕн çавсене пурне те фронт валли çителĕклĕ парса тăмалла. Орденсемпе медальсем илнĕ юлташсен ячĕпе вăл çапла пĕлтерчĕ: тăван çĕршыв кирек мĕнле задани парсан та, эпир ăна пурнăçа кĕртме мĕнпур вăй-хала парăпăр, — терĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ аслă награда илме тивĕçлĕ пулнисене орденсемпе медальсем илнĕ ятпа чĕререн саламларĕ, малашне те ăнăçусем тума сунчĕ.

— Эсир отечественнăй вăрçă кунĕсенче, пирĕн Хĕрлĕ Çар Германи фашизмне хирĕç хаяррăн çапăçнă вăхăтра, рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государстви çине ултавлăн тапăннă оккупантсене совет воинĕсем геройла çапа-çапа аркатнă вăхăтра награда илетĕр. Çавăнпа та ĕнтĕ эсир тунă ĕç — тăван çĕршывăн оборонишĕн паха ĕç пулса тăрать. Вăрçă кашни совет çыннишĕн тĕрĕслӳ пулса тăчĕ. Совет патриочĕсем халĕ тăшмана çĕнтерме мĕн кирлĕ, çавсене пурне те тăваççĕ, мирлĕ вăхăтра тума май çук пек курăннă ĕçсене те тăваççĕ, — тет Андреева юлташ. — Эпир пĕлетпĕр: фронтра тата тылра пурте пĕтĕм вăй-халпа тăрăшнипе, эпир пире тарăхтарса çитернĕ тăшмана çĕнтеретпĕр. Эпир çак вăрçăра çĕнтерессине шанса тăратпăр, мĕншĕн тесен пире кĕрешӳре Сталин юлташ пуç пулса тăракан, çапăçусенче пиçĕхнĕ большевиксен партийĕ ертсе пырать.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

I.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăюллă пулса çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, личнăй состав çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн, латышсен 201-мĕш стрелковăй дивизийĕнчен латышсен 43-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ тунă.

Дивизи командирĕ — генерал-майор **Ян Янович Вейкин.**

Асăннă дивизие гварди ялавне параççĕ.

II.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăюллă пулса çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн, личнăй состав çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн, 5-мĕш хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизирен 44-мĕш гвардейски хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизи тунă.

Дивизи командирĕ—полковник **Дмитрий Андреевич Куприянов.**

Асăннă дивизие гварди ялавне параççĕ.

Сталинградшăн пыракан çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 5-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче çапăçусем хаярланнăçемĕн хаярланса пыраççĕ. Нимĕçсем урса кайсах атакăласа, хăйсен танкĕсемпе пехоти валли çул уçса парасшăн.

Фашистсен чаçĕсем пĕр участокра пирĕн оборонăна татма хăтланнă. Гитлеровецсем темиçе хутчен тунă атакăсем ăнăçуллă пулман. Противник пысăк çухатусем тӳснĕ. Пирĕн боецсем урамсенче тата ишĕлнĕ çуртсен куписем айĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене 700 яхăн шутласа кăларнă.

Урамсенче пĕр вăхăтрах вуншар тĕлте тытăçусем пулнă, унта пуринчен ытла вак групăсем çапăçнă. Юлашки вăхăтра нимĕç командованийĕн саперсен подразделенийĕсемпе строительнăй подразделенисен салтакĕсемпе те стрелоксем вырăнне усă курма тивнĕ.

Совет боецĕсем кашни кварталшăн, çуртшăн, картишшĕн çав тери вăйлăн çапăçаççĕ. Нимĕçсем хулан икĕ секторĕнче пĕр кун хушшинче 1000 салтакпа офицера яхăн çухатнă.

Пĕр картишĕнче автоматсемпе тата пулеметсемпе хĕçпăшалланнă 12 гитлеровец çирĕпленсе ларнă. Вĕсене унтан хăваласа кăларас ĕçе 4 гвардеец — Свистунов, Акулишев, Стропов тата Даспарьян хăйсем çине илнĕ. Гвардеецсем фашистсене атакăланă та пĕтерсе тăкнă. Гвардеецсен пысăках мар тепĕр группи тăшманăн автоматчикĕсем кĕрсе ларнă çурта çавăрса илсе пĕр талăк хушши хупăрласа тăнă. Боецсем 70 нимĕçе яхăн пĕтерсе тăкнă.

Д. ЩУКИН.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Октябрӗн 5-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 5-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче тата **Моздок** районӗнче ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче пӗлтерӗшлӗ улшӑнусемех пулман.

Балтика тинӗсӗнче пирӗн карапсем нимӗҫсен 10.000 тонна водоизмещениллӗ транспортне путарнӑ.

* * *

Октябрӗн 4-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 10 танкне, войскӑсем турттарса пыракан 30 автомашинине тата горючи тултарнӑ 4 автоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунҫул ҫинчи состава ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине 2 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Противникӑн 3 пехотнӑй дивизийӗ тата 100 танкӗ завод поселокӗ еннелле наступлени пуҫласа янӑ, вӗсене авиаци пулӑшса пынӑ. Совет войскисем гитлеровецсен нумай хутчен тунӑ атакисене сирсе янӑ, нимӗҫсене пысӑк ҫухату кӳнӗ. Ҫав ҫапӑҫура, туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсен 14 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ тата противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1000 ҫынна ҫити вӗлернӗ. Пирӗн артиллери тата гвардеец-минометчиксем минометсен 5 батарейине, 85 автомашина тата нимӗҫсен пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри пӗр участокра пирӗн войскӑсем активлӑн ҫапӑҫса, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 вилли таран выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 3 танкне, пӗр бронемашинине, 4 орудине тата 6 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Боецсен пӗр ушкӑнӗ, старшина Свиридов юлташ ертсе пынипе, противникӑн траншейисене ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ, вӗсем унти гитлеровецсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ те ҫӗнӗ рубежра ҫирӗпленсе ларнӑ. Нимӗҫсем часах контратака пуҫласа янӑ. Пирӗн боецсем противникӑн йышлӑрах вӑйӗсемпе икӗ сехет хушши ҫапӑҫса, ҫав атакӑна сирсе янӑ, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 50 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Моздок районӗнче халӑх пурӑнакан пӗр пунктра ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Н-ски соединенин чаҫӗсем противникӑн пехотипе танкӗсен тӑватӑ атакине сирсе янӑ. Кунҫа пирӗн боецсем нимӗҫсен 12 танкне персе ҫӗмӗрнӗ, 6 миномет тата 6 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна ҫити вӗлернӗ е амантнӑ.

Октябрӗн 5-мӗшӗнче пирӗн часть тӑракан вырӑна тӑшман самолечӗ анса ларнӑ. Нимӗҫ летчикӗ хӑй прӗкӗпе тыткӑна парӑннӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: эпӗ Германи ҫӗнтерессе ӗненместӗп, хам юна Гитлершӑн тӑкмастӑп, тенӗ.

* * *

Брянск фронтӗнче пирӗн чаҫсем пӑшалпа тата пулеметпа персе противникӑн чӗрӗ вӑйне пӗтерсе пынӑ. Кунҫа вӗсем 230 гитлеровеца вӗлернӗ. Политрук заместителӗ пулса ӗҫлекен Можара юлташ тата красноармеецсем Латышевпа Травка юлташсем противникӑн оборонине кӗрсе кайнӑ. Нимӗҫсен окопӗсем патне ҫитиччен пӗр 40—50 метр юлсан, вӗсем ура ҫине сиксе тӑнӑ. Гитлеровецсем, боецсем тыткӑна парӑнаҫҫӗ тесе шутласа, окопран тухнӑ та вӗсене хирӗҫ утса кайнӑ. Можара юлташпа красноармеецсем гранатӑсем туртса кӑларнӑ та нимӗҫсен ушкӑнӗ ҫине вӑркӑнтарнӑ. Нимӗҫсен 12 салтакӗпе офицерне вӗлерсен, пирӗн боецсем хӑйсен подразделенине таврӑннӑ.

* * *

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Ростов урамӗсемпе площачӗсене юнпа шӑвараҫҫӗ. Советсен мирлӗ гражданӗсене йышлӑн арестлемесӗр тата пере-пере пӑрахмасӑр пӗр кун та иртмест. Сентябрӗн 14-мӗшӗнче эсэсовецсен банди арестленӗ ҫынсен пӗр йышлӑ ушкӑнне баржа ҫине лартнӑ. Нимӗҫсен палачӗсем вӗсене ҫӗркаҫа тискеррӗн асаплантарнӑ, кайран вара шыва пӑрахса путарнӑ. Сентябрӗн 21-мӗшӗнче нимӗҫ палачӗсем Камышевакински паркра 80 арҫынпа хӗрарӑма персе пӑрахнӑ. Нумаях пулмасть Буденный проспектӗнче такам кӑнтӑрлах пӗр нимӗҫ офицерне вӗлернӗ. Фашистла бандитсем ҫывӑхри мӗнпур урамсене хупӑрласа илсе малтан тӗл пулнӑ 100 ҫынна ярса тытнӑ та пурне те персе пӑрахнӑ, вӑл шутра хӗрарӑмсемпе ҫамрӑк ачасем те пулнӑ.

* * *

Румынире лару-тӑру кунсеренех ҫивӗчленсе пырать. Румынсем нумайӑшӗ вӗсен ҫӗршывне нимӗҫ провинцийӗ туса хунӑ гитлеровецсене хӑйсем курайманнине пытарса тӑмаҫҫӗ. Ҫакӑн пирки Гитлерӑн Румынири тарҫисем хӑраса ӳкнӗ. Антонеску пӗр 5 кун хушшинче кӑна темиҫе хаяр закон алӑ пусса кӑларнӑ. Саботаж тунӑшӑн тата ҫӗршыври лару-тӑру ҫинчен даннӑйсем сарнӑшӑн асаплантарса вӗлерме хушакан постановлени пичетлесе кӑларнӑ. Дезертира тарнӑшӑн тата призыва пыманшӑн, ҫавӑн пекех тата ҫар предприятийӗсенче ӗҫлесрен пӑрӑнса ҫӳренӗшӗн персе пӑрахмалли ҫинчен калакан закон кӑларнӑ. Продовольстви пама килӗшмен хресченсене асаплантарса вӗлермелле тунӑ. Юлашкинчен тата уголовнӑй кодекса чылай ҫӗнӗ тӳрлетӳсем кӗртнӗ. Ҫак мерӑсем пурте пӗрле пулӑшнипе нимӗҫ захватчикӗсемпе вӗсен тарҫисем вӗсене хӑйсене хирӗҫ усҫӑнрах та усҫӑнрах хирӗҫ тӑракан румынсен тарӑхӑвне юн тӑкса путарса лартма шухӑшлаҫҫӗ.

Октябрӗн 6-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳрен

Октябрӗн 6-мӗшӗн ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче тата **Моздок** районӗнче ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче нимӗн те улшӑнман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе тата пехотипе ҫапӑҫнӑ. Н-ски часть хӳтӗлекен участока нимӗҫсен пӗр полка ҫити пехота тата 15 танкӗ атакӑланӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсен 7 атакине сирсе янӑ, 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата противникӑн пӗр ротӑна ҫити пехотине пӗтернӗ.

* * *

Атӑл ҫинчи ҫар флотилийӗн карапӗсен артиллерийӗ противникӑн артиллерийӗн икӗ батарейине тата минометсен виҫӗ батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн Н-ски часть активлӑн ҫапӑҫса малалла куҫнӑ. Противникӑн уйрӑм участокӗнче [illegible] тунӑ, анчах та пирӗн подразделенисем пулеметсемпе, [illegible] персе [illegible] сирсе янӑ. Ҫапӑҫура нимӗҫсен 400 салтакӗпе офицерӗ таран вилнӗ. Тӑшман 29 пулеметне, пӗр орудине тата [illegible] пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен пӗр [illegible] пӑшалӗпе персе ӳкернӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн боецсем противникӑн атакине сирсе янӑ. Пирӗн артиллеристсемпе минометчиксем 3 танка пӗтернӗ. Тепӗр участокра гвардецсем [illegible] нимӗҫсен 4 танкне тата 13 лавне персе [illegible] тӑкнӑ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Новороссийскран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн участокра совет боецӗсем [illegible] тунӑ та [illegible] румынсен батальонне ҫапса [illegible], 2 танкне тата 7 пулеметне пӗтернӗ. Пирӗн зенитчиксем нимӗҫсен 2 самолетне персе ӳкернӗ, 2 самолетне [illegible] пӗтернӗ.

Ленинград фронтӗнче пирӗн подразделенисем активлӑн кӗрешнипе тата артиллерийӗпе минометсем тата снайперсем пеннипе, [illegible] кун хушшинче гитлеровецсене [illegible] ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Хӗрлӗ ялавлӑ Балтика флочӗн летчикӗсем противникӑн аэродромне аслӑн таптаннӑ. Бомбӑсем пӑрахса тата [illegible] персе, пирӗн летчиксем «Юнкерс—88» йышши 7 бомбардировщикне персе тӑкнӑ, 12 бомбардировщикне сиенленӗ. Кунсӑр пуҫне, сывлӑшри ҫапӑҫура пирӗн летчиксем нимӗҫсен 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 294-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 515-мӗш полкӗн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Максимилиан Маттнер ҫапла каласа панӑ: «Хӗлле Харьков патӗнче пулнӑ ҫапӑҫусенче [illegible] госпитальсенче выртрӑм, август [illegible] ҫапӑҫӑва [illegible]. Ҫав вӑхӑт тӗлне пирӗн рота [illegible]. Хам пӗлекен салтаксене пӗтӗм батальонӗпе те [illegible] ҫынна ҫеҫ тупрӑм. [illegible] 5-мӗш ротӑра 145 ҫын пулнӑ. [illegible] 150 ҫын [illegible] 40 салтакран ытла юлман. [illegible] Дивизи командирӗ [illegible] генерал [illegible]».

* * *

Фашистла тыткӑнран тарса килнӗ совет гражданӗсем нимӗҫсен фашистла адресӗпе Кубаньри оккупациленӗ районсенче [illegible]. Краснодар крайӗнчи [illegible] нимӗҫсем [illegible] тискеррӗн тыткалама тытӑннӑ. Гитлеровецсем малтанах Шилин, Токарев тата Поляков колхозниксене [illegible] пурне те [illegible]. [illegible] Украина колхозниксем [illegible].

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕНЕ ПУРНӐҪЛАТПӐР

Фройман юлташ директор пулса ертсе пыракан заводра нумаях пулмасть фронтовиксен делегацийӗ пулчӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем умӗнче завод коллективӗ Октябрь уявне пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме обязательство илнӗччӗ. Халӗ кашни рабочи, кашни работница хӑйӗн обязательствине срокчен пурнӑҫлассишӗн кӗрешет.

Заводри рабочисем Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва пурте хутшӑннӑ. Ӑмӑртӑвӑн малтанхи кунӗсенчех стахановецсен йышӗ 80 процента, ударниксен йышӗ 10 процента ҫитрӗ. Ҫапла вара завод сентябрь уйӑхӗнче продукци туса кӑларас заданине 180 процент, уйӑхри плана 134 процент тултарчӗ, материалсене 9 процент перекетлерӗ.

Заводри стахановецсем—Ф. Петухова нормӑна 220 процент, Н. Бахмутова 200 процент, П. Павлова 150 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Пегаева юлташ ертсе пыракан цех сентябрь уйӑхӗнчи плана 110 процент тултарчӗ, вӑл мала тухрӗ.

Ҫак вӑхӑт хушшинче завод коллективӗ хӑйӗн подсобнӑй хуҫалӑхӗнчи тырпула плацпа пӑхнинчен 5 кун малтан пуҫтарса кӗртнӗ. Продукци кӑларма икӗ уйӑх валли сават-сапасем хатӗрленӗ.

А. ХВОЛЕС,
Завод директорӗн заместителӗ.

Планран ирттерсе 45 процент

Ҫӗршыв умне хӑрушлӑх тухса тӑнӑ вӑхӑтра кашни совет патриочӗ мӗнпур вӑя, пултарулӑха тӑван Хӗрлӗ Ҫарпа фронта пулӑшнӑ ҫӗре пама тӑрӑшать.

Пирӗн цех коллективӗ фронта пулӑшассине татах та вӑйлатас тесе, Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци XXV ҫул тултаракан уяв умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑй ҫине сентябрьте планран ирттерсе 40 процентран кая мар продукци туса кӑларма обязательство илнӗччӗ. Ҫакна коллектив тивӗҫлипе пурнӑҫларӗ, эпир иртнӗ уйӑхра планпа палӑртнинчен 45 процент ытларах продукци туса кӑлартӑмӑр.

Ӑмӑртӑва сарса пынӑ май цехра стахановецсемпе двухсотниксен йышӗ куллен ӳссе, нумайланса пырать. Сентябрь уйӑхӗнче уйрӑм рабочисем рекордла ҫитӗнӳсем турӗҫ. Столяр Карасева юлташ, малтанхи уйӑхсенче икшер норма туса ӗҫленӗскер, сентябрьте вӑтамран кашни кунах нормӑна 380 процент тултарса ӗҫлерӗ, вӑлах уйрӑм кунсенче 5-шер норма туса пычӗ. Комсомолка О. Иванова та ӗҫ тухӑҫлӑхне икӗ хут ытла ӳстерчӗ, вӑтамран вӑл нормӑна 280 процент тултарса ӗҫлет. Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыҫҫӑн столяр Ишмендеров, Василий Кузьмин, маляр Герасимова, сборщик Савадеров юлташсем те пысӑк улшӑнусем турӗҫ. Халӗ вӗсем хӑйсене панӑ заданисене 220—240 процент тултараҫҫӗ.

Пирӗн цехра бригадӑсемпе сменӑсем те пӗр-пӗринпе ӑмӑртаҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра уйрӑмах коммунист Подклетновӑн тата Васильевпа Михайлов юлташсен сменисем лайӑх результатсем кӑтартаҫҫӗ. Вӑл сменӑсем обязательство тӑрӑх сентябрь уйӑхӗнче тумалли ӗҫсене ытлашшипех пурнӑҫларӗҫ. Ку сменӑсенче рабочисем пурте тенӗ пекех ӗҫ нормисене ирттерсе тултараҫҫӗ, вӗсенчен ҫурри ытла двухсотниксемпе стахановецсем.

Цех коллективӗ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци XXV ҫул тултарнине производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳ тунипе паллӑ тума хатӗрленет. Цехра кунӗн-ҫӗрӗн хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Рабочисем, панӑ заказсене вӑхӑтра пурнӑҫлас тесе, вӑхӑта пӑхмасӑр, вӑя шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Кирлӗ пулсан вӗсем темиҫе смена хушши цехран тухмасӑр ӗҫлеме хатӗр.

В. ДАНИЛОВ,
Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи цех начальникӗ.

Сентябрь уйӑхӗнчи ҫӗнтерӳ

КАНАШ. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). «Авангард» промысла артелӗ (председателӗ А. Васильев, пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ М. Степанов юлташсем) сентябрь уйӑхӗнчи плана 181,2 процент тултарчӗ. Вӑл шутран куллен кирлӗ таварсем туса кӑлармалли задание 192,4 процент пурнӑҫа кӗртрӗ.

Артелӗн цехӗсем пурте пекех уйӑхри плана нумай ирттерсе тултарнӑ: чӳлмек тӑвакан цех (заведующийӗ П. Журавлев юлташ) — 192,6 процент, сӑрантан ҫӗнӗ атӑ-пушмаксем ҫӗлекен цех (заведующийӗ Сапожников юлташ) — 194 процент, ҫӗвӗ ҫӗлекен цех (заведующийӗ В. Михайлов юлташ) — 384 процент, пахча-ҫимӗҫ ӗҫӗнче ӗҫлекенсем плана 465 процент пурнӑҫа кӗртнӗ.

Ҫапла вара, сентябрь уйӑхӗнче артельре ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 21 процент ӳснӗ, продукцин хӑйне ларакан хакӗ 2 процент чакнӑ.

Ҫӗвӗ ҫӗлекен цехра ӗҫлекенсем Ольга Абрамова, Наталия Герасимова, Екатерина Абакумова, Серафима Оранова ӗҫ нормине яланах 200 процентне ытларах та тултарса пынӑ. Ҫак цехра Чумаковӑпа Пыгина работницӑсем ӗҫ нормине 250 процент таран тултарни те пулнӑ.

Август уйӑхӗнче лайӑх ӗҫленипе Чӑваш республикинчи промысла артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче «Авангард» артель, пӗрремӗш вырӑна йышӑнса, 10 пин тенкӗ премi илнӗ. «Авангард» артелӗн коллективӗ Октябрь уявӗ ячӗпе ӑмӑртӑва тухса хӑй ҫине илнӗ обязательствӑсене те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырать, сентябрь уйӑхӗнчи ӑмӑртӑвӑн итогӗсем тӑрӑх ЧАССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме ӗмӗтленет.

Артельре стахановла ӗҫлекенсен йышӗ ӳссе пырать. Сентябрь уйӑхӗнче стахановецсемпе ударниксен йышӗ 126 ҫынна ҫитнӗ.

П. НИКОЛАЕВ.

Ҫӗнӗ продукци тума тытӑннӑ

КАЛИНИНО. Ишлейри «Новая сила» промысла артелӗнче ӗҫлекенсем Октябрь уявне ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Артель членӗсем социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыҫҫӑн производствӑри двухсотниксемпе трехсотниксен йышӗ чылаях ӳсрӗ.

Кашӑк тӑвакан цехра ӗҫлекенсем А. Мерекин, А. Воронин юлташсем кулленхи нормӑна 2—3 хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Вӗсем сентябрь уйӑхӗнче продукци туса кӑларас плана 155 процент тултарнӑ.

Артельте халь йывӑҫ кӑмрӑкӗ, хурӑн хуппинчен тикӗт тата ялхуҫалӑх машинисемпе транспорт инвентарӗсем тӑвас ӗҫе ҫӗнӗрен организациленӗ.

Г. МАТВЕЕВ.

Уяв парнисем хатӗрлеҫҫӗ

ВӐРНАР. Пӑвалӗнчи «Большевик» колхоз Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем яма йышӑнчӗ. Колхоз парне яма 12 килограмм махорка, 135 ҫӑмарта, 3 килограмм пыл, 1 килограмм ҫу, 5 чӑх, 2 центнер купӑста тата 80 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ хатӗрлет.

Чӑрӑшкас Мӑратри «11-летие Чувашии» колхоз членӗсем совет воинӗсем патне 60 килограмм тул ҫӑнӑхӗ, 9 килограмм махорка, 2 чӑх, 2 килограмм ҫу, 1 килограмм пыл, 60 ҫӑмарта яма йышӑннӑ.

И. КОРАКОВ.

* * *

КАНАШ. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). Туллимар сведенисем тӑрӑх, районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницӑсем Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем яма 300 килограмм какай, 70 килограмм ҫу, 150 килограмм пыл, 150 килограмм премӗк, 50 килограмм махорка, 200 килограмм конфета, 150 литр эрех, 300 килограмм колбаса, 2 тонна тулӑ ҫӑнӑхӗ, 1 тонна ытларах ҫӗрулми, пыллӑ сӑра тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрленӗ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 80 килограмм пыл, 150 литр пыллӑ сӑра, Доронин ячӗпе тӑракан колхоз 50 килограмм какай, 1 центнер тулӑ ҫӑнӑхӗ, 100 литр пыллӑ сӑра, 40 килограмм пыл, «Мотор» колхоз 92 килограмм какай, 15 килограмм пыл, 100 ҫӑмарта, 50 килограмм хӑяр тата ҫӗрулми ярса параҫҫӗ. «Броневик» колхоз 130 килограмм какай, 1 центнер тулӑ, 1 центнер купӑста ярса парать.

Районри ӗҫҫыннисем уйрӑмшар посылкӑсем яма хатӗрленеҫҫӗ. Мамакин юлташӑн икӗ ывӑлӗ Хӗрлӗ Ҫарта. Вӑл 1 литр эрех, 10 ҫӑмарта, 1 пачка махорка, спичкӑсем, хут тата карандаш чикнӗ посылка хатӗрлет. Сиккассинчи колхозра кӑна колхозниксемпе колхозницӑсем пӗтӗмпе 20 посылка яраҫҫӗ. Ҫав посылкӑсене 14 килограмм кӗрпе, 10 килограмм тинкӗле ҫӑнӑхӗ (толокно), 6 килограмм махорка, 216 ҫӑмарта, 2 килограмм ҫу хураҫҫӗ.

П. НИКОЛАЕВ.

* * *

СЕНТЕРВӐРРИ. (**Телефонпа**). Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне парнесем ярас ӗҫе районри ӗҫҫыннисем йышлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Районӗпе тӗрлӗ парнесем 480 пӑт хатӗрленӗ, вӑл шутра: какай, пыл, конфетсемпе премӗксем, колбаса тата ытти апат-ҫимӗҫсем те пур.

Пӗчӗк Маклашкинӑри колхозниксемпе колхозницӑсем парнесем туса яма 46 килограмм какай, 5 килограмм ҫу, 10 килограмм пыл, 40 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 360 килограмм ҫӗрулми, ҫу, ҫӑмарта панӑ.

Ящеринӑри колхоз 40 килограмм какай, 2 килограмм ҫу, 5 килограмм пыл, 40 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 90 килограмм ҫӗрулми пама йышӑннӑ.

Районри колхозсем пӗтӗмпе 300 килограмм какай, 72 килограмм ҫу, 1.500 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 3.000 килограмм ҫӗрулми, 1.600 ҫӑмарта тата ытти продуктсем те хатӗрленӗ.

Судоверфь коллективӗ 3 посылка яма хатӗрленет.

К. РОСТОВЦЕВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Оккупациленӗ совет районӗсенчи халӑхсем гитлерла пусмӑрҫӑсене хаяррӑн курайманҫҫӗ

ЖЕНЕВА, октябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Германири хаҫатсем оккупациленӗ совет районӗсенчи лару-тӑру ҫинчен сырса пӗлтернисем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: ҫав районсенчи халӑхсем нимӗҫ оккупанчӗсене кашни утӑмрах тата пур ӗҫре те хирӗҫ тӑраҫҫӗ.

«Кенигсбергер альгемейне цейтунг» хаҫат хӑйӗн корреспонденчӗн статьине пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав статьяра нимӗҫсем «колхозсене пӗтерме тата оккупациленӗ районсенчи хуласенче массӑллӑ индустрие пӗтерме» ӗмӗтленсе лартнӑ задачӑсем ҫине оккупациленӗ районсенчи халӑхсем мӗнле пӑхни ҫинчен каланӑ. Ҫав хаҫатӑн корреспонденчӗ, пӗр колхозра пулса курнӑскер, ҫав колхоз малтан пуян пурӑннине йышӑнать. «Эпир пырса курнӑ колхозӑн—тесе каланӑ корреспонденцире, — обществӑллӑ ҫуртйӗрсем чылай пулнӑ, шыв паракан башня, столовӑй, хӑйӗн электростанцийӗ, мунча тата витесем нумай пулнӑ, халӗ вӗсем кушанса юлнӑ, ҫавӑн пекех колхозӑн ача-пӑча площадки, больница, администраци валли илемлӗ ҫурт тата лайӑх йӗркеленӗ кино пулнӑ». Гитлеровецсем ҫав колхоза аркатса яма шутланӑ. «Анчах, — тесе йышӑнать корреспондент,—кунта та эпир совет районӗсенче пур ҫӗрте те яланах тӗл пулакан чи хӑрушӑ факта тӗл пултӑмӑр. Пирӗн представительсем ҫамрӑк совет хресченӗсене малашне колхозӑн харпӑрлӑхӗ пӗтесси ҫинчен пӗлтерсен, вӗсем тӗлӗнчӗҫ, савӑнса мар тӗлӗнчӗҫ, вӗсем ҫакна ҫирӗппӗн хирӗҫ тӑни ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Ҫук, вӗсем пирӗн ӗҫе пачах та йышӑнасшӑн мар. Вӗсем хӑйсем халиччен питӗ лайӑх пурӑнни ҫинчен калаҫҫӗ».

Нимӗҫсене курайманни пирки тата вӗсен мероприятийӗсене хаяррӑн хирӗҫ тӑни пирки «Дейче цейтунг ин остланд» хаҫатӑн корреспонденчӗ те ӳпкелешет. Вӑл Псков таврашӗнчи темиҫе ялта пулса курнӑ иккен. Корреспондент хресченсем уншӑла калаҫма кӑмӑлламанни ҫинчен тата «вӗсем шанмасӑр тӑнине ҫӗнтерме ҫукки ҫинчен» тӳрех сырса пӗлтерет.

Ҫав хаҫатах «нимӗҫсен хуҫалӑх командин» пӗр начальникӗн статьине пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав вӑрӑ-хурах «вырӑс хресченӗсем нимӗҫсене ӗненменни пирки тата вӗсем халиччен тытнӑ ҫулран пӑрӑнса урӑх ҫулпа кайма кӑмӑлламанни пирки» ӳпкелешет.

Оккупациленӗ районсенчи халӑх нимӗҫсемшӗн ӗҫлесшӗн мар. Пӗр хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, «Остландӑн (нимӗҫсем Балтика таврашӗнчи совет республикисене ҫавӑн пек ят хунӑ) районӗсенче пурӑнакан халӑх халӗ ӗҫшӗн пӗре те тӑрӑшмасть. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстересси ҫинчен калаҫмалли те ҫук».

«Вильнаер цейтунг» хаҫат ҫапла ҫырать: «Нимӗҫсен пӗр ялхуҫалӑх руководителӗ Украинӑри пӗр яла пырсан, кунта ҫынсем пачах та ӗҫлеменнине, мӗнпур уйхирсем пачах та акӑнмасӑр юлнине курнӑ». «Мӗскершӗн ҫав ҫынсем ӗҫлемеҫҫӗ?»—тесе тарӑхса сухӑрать хаҫат. Литвари лару-тӑру пирки каланӑ май, хаҫат: унти «туземецсем—арҫынсемпе хӗрарӑмсем (урӑхла каласан Литва халӑхӗ) нимӗҫсемшӗн ӗҫлесшӗн мар,—тесе ҫырать. «Малашне,— тесе юнать хаҫат,—ҫав саботажниксене татах та вӑйлӑнрах ответ тыттарӑпӑр, ҫирӗп наказанисем парӑпӑр».

«Ревалер цейтунг» хаҫат Эстонин тӗрлӗ районӗсенче халӑха хӗҫпӑшал салатса паракан ҫынсем палӑрни ҫинчен пӗлтерет. Ҫав ҫынсем ҫинчен вӑхӑтра систермесен е хӗҫпӑшала пытарса усрасан, ҫаксемшӗн ответлӑ ҫынсене хаяррӑн айӑпласси пе хӑратать хаҫат. «Дейче Украине цейтунг» хаҫат вырӑнти хӗҫпӑшал тытса усракан ҫынсене вилӗм кӑна кӗтсе тӑрать тесе ҫырать. «Партизанла движени аталанса пынине, нимӗҫсене питех те пысӑк хӑрушлӑх кӳрекенскере пур майсемпе те чарса лартмалла», тесе ҫуйӑхать хаҫат.

Геббельс Европӑри халӑхсене юнать

ЖЕНЕВА, октябрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Оккупациленӗ ҫӗршывсенчи халӑхсем нимӗҫ пусмӑрҫисене хирӗҫ тӑрасси вӑйланса пыни гитлеровецсене питех те шиклентерет. Ҫакӑ вӑл, тӗслӗхрен илсен, Геббельсӑн «Дас рейх» хаҫатри демагогиллӗ черетлӗ статьинче те палӑрать. Геббельс фашистла Германин вассалӗсене хӑйсен пӑхӑнса тӑмалли положенийӗпе ҫырлахма, нимӗҫ «господинӗсем» пуҫ пулса тӑнине йышӑнма чӗнет.

Анчах та Геббельс Европӑри халӑхсем ҫавнашкал перспективӑна хирӗҫ тӑнине кӑтартакан фактран пӑрӑнса кайма пултараймасть; халӑхсем оккупантсене хирӗҫ тӑнине Геббельс «ҫӗнӗ йӗрке Европӑра тӗл пулакан хӑшпӗр кӑлтӑксем» тесе ҫепӗҫӗн ят парать.

Нейтралитет тытакан государствӑсен позицийӗ Геббельса уйрӑмах тарӑхтарать. Ҫав ҫӗршывсенчи халӑхсен массисем хушшинче гитлеризма курайманни ҫинчен усҫӑнах туха-туха калаҫҫӗ. Геббельс ҫав нейтральнӑй государствӑсене, унӑн сӑмахӗсем тӑрӑх, «ҫӗнӗ йӗрке» ҫине питех те йӗрӗнсе хӑраса тата иккӗленсе пӑхаканскерсене, хыттӑнах асӑрхаттарать. Германия, — тесе ҫырать Геббельс,—хӑйӗн умне «мӗнпур континента ҫапӑҫусемпе (урӑхла каласан, вӑйпа) урӑхлатса ҫӗнетес» задача лартать. Вӑл Швеципе Швейцарине ҫапла юнать: «Хальхи вӑхӑтра нейтральнӑй государствӑсен столицисенче аш-какайпа ҫу Берлинринчен тата Римринчен ытларах ҫиеҫҫӗ пулсан, ҫакӑ вӑл тепӗр вунӑ ҫултан та ӗҫ ҫакнашкалах пуласси не пачах та пӗлтермест», урӑхла каласан, Германия ҫав ҫӗршывсем валли те халӗ нимӗҫсем чуралӑха кӗртсе ӳкернӗ ҫӗршывсен йӑлипинех туса пама хапсӑнать.

Копенгагенра халӑхпа „добровольцесем“ хушшинче пулнӑ тытӑҫусем

СТОКГОЛЬМ, октябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫак кунсенче Копенгагена Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтран «добровольцесен корпусӗ Дания» ятлӑ ушкӑнӑн юлашкийӗсем таврӑннӑ, ҫав «корпуса» совет войскисем ҫапса аркатнӑ. «Добровольцесем» Дани столицин урамӗсене тухсан, халӑх вӗсене питех те ҫилленсе кайнӑ. Нумайӑшӗ хӑйсем гитлерла сутӑнчӑксем ҫине йӗрӗнсе пӑхнине уҫҫӑнах палӑртнӑ. Ҫавна пула, Данин Ритзаус—бюро агентстви официально пӗлтернӗ тӑрӑх, хулара «хуйхӑллӑ ӗҫсем» пулнӑ. Урса кайнӑ добровольцесем хӑйсене «хисеплемен» ҫынсене револьверпа пеме тытӑннӑ. Копенгаген хулин варринче Вестербрегаде урамӗнче тата Ратуша площадӗнче 5 ҫынна амантнӑ. Полици инспекторӗ халӑха «лӑпкӑ тӑма, ҫавӑн пекех тата урамсенче тавлашу-тытӑҫу пулнӑ чухне пухӑна-пухӑна тӑрасран сыхланма» чӗнет. Дани хаҫачӗсем хӑйсен умстатьисенче халӑхӑн хӑйне хӑй ҫирӗп алӑра тытма кирли ҫинчен ҫыраҫҫӗ, мӗншӗн тесессӗн, «Политикен» хаҫат каларӑшле, «Дани халӑхӗ ҫак ҫулсенче пурӑнакан условисене пула унӑн нервисем унсӑрӑн та ҫивӗчленсе ҫитнӗ».

Павеличӑн хаҫачӗсем „кӑмӑлсӑр ҫынсемпе пӑлхавҫӑсене“ хирӗҫ репрессиллӗ мерӑсем йышӑнма ыйтаҫҫӗ

ЖЕНЕВА, октябрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС): Сентябрӗн иккӗмӗш ҫурринче Загреб хулинче нимӗҫ генералӗсем Альфред Стреччгуспа Эмиль Зельнер пулнӑ. Генералсем Павеличпа нумай вӑхӑтчен калаҫнӑ. Нимӗҫ генералӗсем Загреба, кунта партизансем активлӑн кӗрешнине пула тата Павеличӑн ҫарӗ поражениесем тӳснине пула тухса тӑнӑ лару-тӑрупа Германин главнӑй командованийӗ питех те кӑмӑлсӑрланнӑ пирки, пынӑ. Стреччгус Гитлер ячӗпе Павелича ҫапла каланӑ: Югослави партизанӗсене хирӗҫ кӗрешме Германипе Итали урӑх пӗр ҫар чаҫӗ те яма пултараймаҫҫӗ, Хорватие партизансенчен тасатасси пӗтӗмӗшпех «Хорвати ҫарӗ» ҫине ӳкет, тенӗ.

Ҫӗршыври халӑхӑн тарӑхӑвӗ ӳссе пынӑ пирки хаҫатсем питех те шикленсе ҫыраҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, «Нова харатска» хаҫат хӑйӗн умстатьинче ҫакна палӑртать; кӑмӑлсӑр ҫынсемпе пӑлхавҫӑсене хирӗҫ Павеличӑн влаҫӗсем тӗмӗнле драконла мерӑсем йышӑнаҫҫӗ пулин те, вӗсен йышӗ ӳссех пырать. Вӗсем хӑрушла вӑй пулса ҫитӗнеҫҫӗ. «Ҫынсем кӑмӑлсӑрланни пирӗн обществӑна хурт пекех кышлать», тесе ҫырать хаҫат.

Хаҫатсем «кӑмӑлсӑр ҫынсемпе пӑлхавҫӑсене» хирӗҫ репрессиллӗ ҫӗнӗ мерӑсем йышӑнма ыйтаҫҫӗ. Загребра тухакан «Государство» хаҫат «хресченсем ялсенчен массӑллӑн тарнине» йышӑнать тата хресченсене, хӑйсен хуҫалӑхӗсенчен пӑрахса кайнӑскерсене, «ӗҫлеттермелле тӑвас тесе», ялсене ирӗксӗрлесе таврма ыйтать.

Хорватири лару-тӑру ҫивӗчленсе кайнине Павеличӑн влаҫӗсем юлашки вӑхӑтра йышӑннӑ чылай мероприятисем те кӑтартса параҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, сентябрӗн 13-мӗшӗнче Хорватири полици управленийӗ уйрӑм приказ кӑларнӑ. Ҫав приказпа халӑха «каҫхине 9 сехет иртсен ҫар объекчӗсем вырнаҫнӑ ҫӗрте пулма тата усташсемпе полици чаҫӗсен казармисем патне ҫывӑха пыма» чарнӑ. Ҫав приказа пӑсакансене вӗлермелле тӑваҫҫӗ. Ҫав мерӑна ӑна юлашки вӑхӑтра Югослави патриочӗсем казармӑсемпе ҫар объекчӗсене час-часах пыра-пыра тапӑннӑ пирки тунӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Требуется секретарь-машинистка Чувашской конторе «Сельхозснабжения».
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 34. Телефон 0-94.
«Селхозснабжение».

ПРОПАЛА КОБЫЛИЦА рыжей масти, на лбу звезда. немного прихрамывает. восьми лет. Задержавшему будет выдано вознаграждение. ЧЕБОКСАРСКИЙ ВИНКОМБИНАТ РОСГЛАВВИН

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

IТ 48 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.